К.В. Иванов çинчен Е.Ф. Шувалова аса илни / Н. Данилов çырса илнĕ // Чăваш коммунĕ. – 1940. – 18 юпа.

# К. В. Иванов çинчен Е. Ф. Шувалова[1] аса илни

Эпĕ, çичĕ çул тултарсан, Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен чăваш шкулĕ çумĕнчи пуçламăш классене вĕренме кĕнĕ. 1903-мĕш çулта приготовительный класа куçнă. Константин Васильевич Иванов та кĕркунне пирĕнпе пĕрле çав класах вĕренме кĕчĕ. Приготовительный класра ун чухне арçын ачасем те, хĕрсем те пĕрлех вĕренетчĕç.

Эпир вăл вăхăтра мастерской кирĕслерекен чул çуртра, çулти хутĕнче пысăк пӳлĕмре вĕренеттĕмĕр. Пирĕн класра пурĕ 45 ача яхăнччĕ.

Константин Васильевич питĕ лайăх вĕренетчĕ. Пĕр вăхăтра эпир хĕрсем: вăл Чĕмпĕре двухклассăй шкул пĕтерсе килнĕ пулĕ, çавăнпа лайăх вĕренет, тесе шухăшлаттăмăр. Хуть те хăш преподаватель ыйтсан та, вăл нихӑçан та уроксене калаcа памасăр хăварман. Пурнчен ытла — чăвашла сочиненисем лайăх çыратчĕ. Чистописани лайăх çырнăшăн ăна пирĕн атте те мухтатчĕ.

Переменăсенче парта хушшинчен те тухмастчĕ. Пирĕнпе, хĕрсемпе, уйрăмах кăмăлланчĕ. Ситмеппине тата вăл питĕ тата тумланатчĕ: тĕрленĕ кĕпе, çан-сутă атă, тĕттĕм-кăвак тĕслĕ елен[2]) тăхăнса çӳретчĕ. Мĕн çырни çинчен каласнипе илтмен. Анчах çакна питĕ лайăх астăватăп:

Иван Яковлевич хушнă тăрăх атте пичете хатĕрленекен пур кĕнекесене те вула-вула тухатчĕ, кирлĕ тĕлсене тӳрлетсе пыратчĕ. Çак майпа вăл 1908 çулта пичетленсе тухнă халлапсемпе юрă кĕнекисене те, вăл шутра «Нарспи» поэмăна та, пĕрре кăна мар вуланă. Хăшпĕр тĕлсене вăл, ытараймасăр, аннепе сасăпах вуласа кăтартатчĕ те:

— Хитре каланă вĕт, е? Кăна пирĕн ачасем çыраççĕ! — тесе савăнатчĕ. Е тата урăх тĕле вуласа паратчĕ те:

— Аванлантарма-и кăна, çук-и? — тесе ыйтатчĕ аннерен.

Эпĕ ун чух чухне уроксене вĕренме тăрахаттăм та, алă ĕçĕ тытса, чуна çĕклентерсе илĕртекен Нарспипе Сетнер çинчен шухăша каяттăм. Ман ума пилĕкĕ таран явăнса пыракан çивĕтлĕ сарă хĕр Нарспи пырса тăратчĕ. Тем пирки эпĕ ăна шурăмпуç килнĕ чухне залак патĕнче тăп-тăрă çăл шывĕпе çăвăнса тăнă пек куратăм. Тен Константин Васильевич Нарспине малтан çавăн пек сăнласа ӳкернĕ пулнă пулĕ[3]) Анчах ун чухне «Нарспине» хампа пĕрле вĕреннĕ ача çырнине пĕлмен эпĕ.

Константин Васильевич 1905—1907-мĕш çулсенче шкулти революцилле пăлханăва хутшăнни çинчен çакна калама пултаратăп: вĕсен класĕнчи ачасем ун чухне вырăс чĕлхине вĕрентекен преподаватель Д. И. Кочурова хирĕç кытă тăчĕç. Константин Васильевич çав преподавателе мăшкăласа класри доска çине каррикатурăсем рисовать тунă, тетчĕç. [4])

Шкул инспекторне И. Я. Яковлева тĕрлĕрен требованисемпе петици панă кун 1-мĕш класра вĕренекен ачасем пурте Яковлев пурăннă çулти здани патне пухăннăччĕ. Хĕрсем вăл кун е кĕпинсем çумне хĕрлĕ бантсем çĕле-çĕле янăччĕ, е çӳçĕсене хĕрлĕ лентăсемпе çивĕтлесе пĕтернĕччĕ. Паллах, Яковлев патне пынă ачасем хушшинче Константин Васильевич та пулнах ĕнтĕ.

Çав кунхинех пулас, çулти здани патĕнчи алăпа ĕçлемелли водокачка тăррине пурхине ирех хĕрлĕ ялав çакнăччĕ. Мастерской зданийĕн иккĕмĕш хутĕнчи чӳрече çине, шалтан, çын кĕлетки туса лартнăччĕ. Çын кĕлеткине одеялăсенчен чĕрке-чĕрке йăваласа тунăччĕ, çине хĕрлĕ пусмапа пĕркенĕччĕ. Хĕрлĕ ялав кам çакнине илтмен, анчах хĕрлĕ çын кĕлеткине Константин Васильевич тунă тесе калатчĕç.

Ачасем час-часах революцилле литературăна хĕрсене те вулама паратчĕç. Обысксенчен хăраса, хĕрсем хăйсем вулама илнĕ кĕнекесене патша портречĕсем хыçне пытаратчĕç. Хăшпĕр чухне мана хамăр хваттерте пытарма парса яратчĕç. Çак литература сарас ĕçе Константин Васильевич мĕн таран хутшăннине татăклăн калама пултараймастăп. Шкулта унпа çывăх хĕрсем пулнă пирки вăл ку ĕçе хутшăнма пултарнах ĕнтĕ. Революцилле пăлханăва шкулта организацилекенсенчен чи хастарри ун чухне II-мĕш класра вĕренекен Цапырин ятлă ача пулнăччĕ пулас.

Класне салатса янă хыççăн шкула тепĕр хут пырсан, Константин Васильевич тепĕр ачапа пĕрле малтан — библиотека çумĕнчи пӳлĕмре, каярах — столярнăй мастерской çинче пĕчĕк пӳлĕмре пурăнчĕ. Çак вăхăтра вăл пирĕн пата та час-часах пыркалатчĕ, аттепе пĕрле вĕсем е чăвашла куçарнă алçырусене, е корректурăсене вуласа тӳрлетсе ларатчĕç.

**Н. ДАНИЛОВ** çырса илнĕ.

---

[1]) Елена Федоровна Шувалова кăсал Пушкăрт республикинчи Пăслăк тлĕнче учительница пулса ĕçлесе пурăнатчĕ.

[2]) Елен — пĕрмеллĕ сăхман, поддевка.

[3]) Çак тĕле К. В. Иванов йăмăкне Мария Васильевнăна вуласа парсан, вăл çапла каларĕ: «Пичче алçырăвĕсенче улăштарнă вырăн питĕ нумайччĕ, терĕ. — Тăррине те, урăх тĕлне те тӳрлете-тӳрлете çырса пĕтернĕччĕ. Хăшне-пĕрне: кусем кирлĕ мар ĕнтĕ тесе, çурса та пăрахатчĕ», терĕ. — Н. Д.

[4]) Ку тĕлте Мария Васильевна çапла каларĕ:

«Пичче пире Д. И. Кочурова пусма çинчен аннă чухне вут пуленкисемпе пенисем çинчен каласа кăтартатчĕ. Ун чӳречисене çĕмĕрсе пĕтернĕччĕ. Класри лампăсене çĕмĕре-çĕмĕре уборнăя кайса пăрахнăччĕ.

— Эсĕ те çапла хăтланнă-и вара? — тесе ыйтрĕ пĕрре атте пиччерен.

— Çук, эпĕ лампăсене ватас çĕре хутшăнман, — терĕ пичче.

Пиччесен класĕ питĕ развитой пулнă, тетчĕç.

— Ман юлташсем пурте манран пысăк, — тетчĕ пичче». — Н. Д.